– Парăнмастпăр, чарăнмастпăр, – терĕ режиссер. – Пьесăна Культура керменĕнче лартатпăр. Эпĕ унта та ĕçлетĕп. Унта эпир ирĕклĕрех. Талантлă çынсем чăмăртаннă халăх театрĕнче. Унсăр пуçне Елизар Асланова, Кирилл Ежова чĕнĕпĕр. Виолетта Урусланова та хутшăнассăн туйăнать. Хутшăнать. Мĕн тери мухтарĕ иккен те пьесăна. Вăйлă спектакль пулать. Ячĕ еплерех! "Юрату – тăвăл, юрату – хĕвел". Çур хула пырса курĕ! Тăвăпăр-и çапла?

– Тăвас-тăвас!

***

Культура керменĕ. Спектакль вĕçленсе пырать. Арканчĕ тĕрме, хăйĕн ĕçне тунă аслати аякка кайса лăпланчĕ. Хĕвел çиçет. Робертпа Диана каллех пĕрле. Чаршав хупăнчĕ те ун умне вылякансем тухса вăрăм рете тăчĕç. Халăх таланчĕсен хушшинче – Виолетта Урусланова, Елизар Асланов, Кирилл Ежов. Куракансем тăвăллăн алă çупаççĕ, автора чĕнеççĕ. Курать Елизар, курать Виолетта: Владислав Сергейч вырăнĕ пушă. Алăк патне çитрĕ Владислав Сергейч, тухса кайрĕ. Çапла вăл хăй автор маррине систерчĕ. Унччене чухланăччĕ Виолетта: пьеса – Владлен ĕçĕ. Владлена мухтаса та, Владислав Сергейча тав туса та алă çупрĕ актриса.

2012-2013

# Пурнăçне çамрăклăха таврăнса вĕçлерĕ



*"Пурнăç – пурăнма". Çапла ят панă хăйĕн повеçне Чăваш халăх писателĕ Лаврентий Таллеров. "Юлашки повеçне" тесе çырма алă çĕкленмерĕ. Мĕншĕн тесен пурнăçĕ татăласса, пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче чĕри тапма чарăнасса пĕрре те кĕтмен вăл: чире çĕнтерессе шаннă. Çавăнпах мана: "Çĕнĕ повеç çырса пĕтерсе пичете хатĕрлесе çитернĕччĕ. Çыру сĕтелĕ çинчех, ятарлă папкăра вăл. Çапах та ăна "Хыпара" е "Тăван Атăл" журнала халех ан пар-ха. Пульницаран килсен тепре пăхсавуласа тухăп", – терĕ.*

*Лаврентий Васильевич хăй те, эпир те, тăванĕсем, чир аллинчен çăлăнасса, çут çанталăк чĕрĕлсе ăшă кунсем çитсен хавшанă организмĕ çирĕпленессе, сывлав çулĕ йĕркеленессе ĕмĕтленнĕччĕ...*

*Повеç ячĕ те символлă: кирек мĕнле лару-тăрура та пурнăçа юрататчĕ паллă çыравçă. Хайлавĕсенчи геройсем ахрат çырмине лексен те вĕсене пурнăçшăн кĕрешме хавхалантаратчĕ, тĕрĕс çул тупса пама тăрăшатчĕ. "Хăшпĕр прозаик сăнарсен шăпине ытла та çăмăл татса панине, тивĕçлĕ сăлтав-*

*сăрах çут тĕнчерен уйăрнине ăнланма пултараймастăп. Мĕншĕн тесен общеотвăн чи аял сийне пакăртатса аннă çын та вилĕм урапи айне лекес мар тесе юлашки вăйне пуçтарса хирĕç тăрать", – тесеччĕ вăл пĕр калаçура.*

*Яла, хăй çуралса ÿснĕ Комсомольски районĕнчи Нĕркеçе, çав тери килĕштеретчĕ. Хăйне хăват та ăс-тăн парса ÿстернĕ, пурнăçăн аслă çулĕ çине кăларнă сăваплă тăрăхпа вăл çыхăнăва нихăçан та татмарĕ. Кашни каймассерен тенĕ пекех Нĕркеçĕн сарлака урамĕпе саркаланса утаттăмăр, Германи çĕр-шывĕ таранах пархатарлă ят çĕнсе илнĕ Нĕркеç кирпĕчĕнчен тунă вăтам шкула кĕрсе Чăваш Республикин чи сумлă хаçат-журналĕнче ĕçлемелĕх пĕлÿ панă учительсене куç умне кăларса ятран асăнаттăмăр, ватă Нĕркеçĕн ватă çырми-çатрисене çитсе ачалăха таврăнаттăмăр. Хăпартланса, çунатланса яшлăхне аса илетчĕ Лаврентий Васильевич. Уйрăмах ялти тантăшĕсемпе театр йĕркеленине, клубра вун-вун спектакль лартнине, "Айдарпа" район центрне кайнине сехечĕ-сехечĕпе каласа кăтартатчĕ. Театра питĕ юратнипе кăна та мар – шкул çулĕсенчех артист пулма ĕмĕтленнĕрен.*

*Айдар рольне ăста выляса Комсомольскисене хытă ал çуптарнă хыççăн Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче иртнĕ конкурса хутшăнма та кайнă вăл. Анчах комисси членĕсем çамрăкăн ĕмĕтне татнă: "Сасă çитсех каймасть, хыçалти ретре ларакансем янкăр илтеймĕç", – тенĕ. "Çавăнпах-тăр пирĕн артистсем хăйсен ролĕсене кăшкăрса выляма юратаççĕ: шăппăнрах сăмахламалла çĕртех", – терĕм те, Лаврентий Васильевич сăпайлăн çапла кукăртса хунăччĕ: "Кăна театр критикĕсем тишкерччĕр, хак паччăр".*

*"Пурнăç – пурăнма" повеç çырса, ум сăмахра "ачалăхпа çамрăклăх савăнăçĕ пулнă колхоз театрĕн актерĕсене асра тытса" тесе Лаврентий Васильевич Таллеров театр асамлăхне пурнăç тăршшĕпех чĕринче упранине яр уççăнах çирĕплетрĕ. Çав вăхăтрах "артист пулаймарăм" тенине унран пĕрре те илтмен, кулянни-пăшăрханнине те сисмен, туйман. Çамрăк чухне пуçарнă ĕçĕ нумай-нумай çул иртсен те ялта сÿнсе ларманшăн, хăйĕн хыççăнхи ăру паян та спектакльсем лартса-кăтартса халăха савăнтарнăшăн вара – питĕ хĕпĕртетчĕ. Тен, çакна тĕпе хурсах вăл "Пурнăç – пурăнма" повеçе хальхи тата килес ăрусем валли палăк евĕр хăварма çырчĕ те-тĕр.*

**Геннадий МАКСИМОВ,**
**Чăваш Республикин Профессионал**
**писательсен союзĕн председателĕн çумĕ.**